Мĕнле пурăнатăн, ял тăрăхĕ?

# Ытларах хамăр çине шанмалла

Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул. Ĕнер анчах этем катăк йĕмпе чупакан ачаччĕ, паян вара шурă çӳçлĕ старик е карчăк. Питĕ кĕске çав çын ĕмĕрĕ. Анчах эпир хамăр çак çĕр çинче мĕншĕн пурăннă пирки шутласа пăхатпăр-иха? Мĕн тума çуратса ӳстернĕ пире? Çакăн пирки шутлама пĕлекен çын, паллах, хăйĕн ĕмĕрне ахаль сая ямĕ, вăл хăйĕншĕн кăна пурăнса пурнăçне ирттермĕ. Мĕн куратпăр-ха паян эпир?

Паллах, çынсем малтанхинчен чылай урăхларах. Ытларах пайĕ хăйсемшĕн кăна тăрăшаканнисем. Хăйсемшĕн мар, халăхшăн, обществăшăн тăрăшакансен шучĕ чакса пырать.

Депутат пулнă май манăн час-часах çынсемпе тĕл пулма тӳр килет. Ытларах чухне сăмах-юмах çитменлĕхсем çине куçса каять. Анчах çакă шухăшлаттарать. Ку çитменлĕхсене пĕтерес тесе кашни хăйĕн вырăнĕнче мĕн тунă-ха? Мĕншĕн эпир ыйтма кăна вĕренсе кайрăмăр? Пĕрле кар тăрса ĕçлесен ыйтусен ытларах пайне татса пама пулатех, чылайăшне татса пама укçа-тенкĕ те кирлĕ мар.

Çитменлĕхсемпе татса памалли ыйтусене икĕ пая уйăрнă пулăттăм. Кусем вĕсем халăхран хăйĕнчен тата влаç органĕсене ертсе пыракансенчен килекеннисем. Тĕслĕхрен, тавралăха, урамсене, кил-çурт таврашне таса тытасси, тирпейлесе тăрасси хамăртанах, кунта пурăнакансенчен килет. Апла пулин те çынсем юлашки вăхăтра çак ответлăха хăйне май туя пуçларĕç. Нумайăшĕ кил-çурт таврашĕнчи çӳп-çапа, çĕрĕк-марăка ăçта килчĕ унта кăларса пăрахма тытăнчĕ. Çак киревсĕрлĕхе кашни ялтах курма пулать. Çитменнине тата ăна автомашинăсем е трактор тележкисем çине тиесех вăрмансене, ялсем таврашĕнчи çырмасене кайса тăкаççĕ. Мĕн кăна çук пулĕ çак тасамарлăхра. Çавна май ку ыйтăва татса парассипе пĕр тăхтаса тăмасăрах ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен кирлĕ мерăсем йышăнас пулать. Халăхпа ĕçлемелле, тăкса тултарнă тасамарлăха пуçтарттарас пулать. Çирĕп ответ тыттарасси пирки те манмалла мар.

Юлашки çулсенче ялсенче пурăнакансем шыва çырмаран е колонкăсенчен илме мар, килĕсенчех кранран юхакан тума тăрăшаççĕ. Йĕрки вара кунта пачах çук. Урамри çулсене пăссах шыв кĕртекенсем те пур. Шыв кĕртес пулсан малтан техусловисем илсе пĕчĕк проектсем тумаллине пурин те пĕлмелле.

Шывпа усă курасси епле лайăххăнса пырать пулсан та, ял çыннисен çăл куççем, çырмасенчи çăлсем пирки те манас марччĕ. Вĕсене юсаса тăрасси, йĕри-тавра тирпей-илем кĕртесси те ялта пурăнаканăн таса тивĕçĕ пулса тăрать. Йывăççем лартасси сахалрах. Хуçалăхсем ӳкнĕ вată йывăççем çĕрсе выртса илемлĕхе пăсаççĕ. Ĕлĕкхи çынсем нумай ыйтусене пирĕнтен лайăхрах татса панă, çăл тавра лартнă йăмрасем çăл куççенчи шыва тытса тăние те пĕлнĕ.

Ял çыннин хальхи вăхăтра пурнăç условийĕсем лайăхланнă май пушă вăхăчĕ те ытларах пулĕ. Анчах çак вăхăтпа туллин усă курма пĕлмеççĕ. Эрехпе ашкăнакансем уйрăмах йышлă. Ку енĕпе ӳссе пыракан ăрăва воспитани парасси те уксахлать.

Паянхи кун ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене хăйсене суйлакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерме çăмăлах мар. Апла пулин те кирлĕ условисене туса парасси – вĕсен тивĕçĕ.

Е тата Апчар ялĕнчи икĕ урамра пурăнакансем паянхи кун та шыва çырмаран çĕклеççĕ. Вĕсем те çынсемех вĕт-ха.

Юлашки вăхăтра ялсем патне çулсем тăвассипе çине тăрса ĕçлерĕç. Мăн Сĕнтĕрпе Ильинка ял тăрăхĕсен территорийĕсенче те çулсем чылай тунă. Малашне те ку ĕç чарăнса лармĕ тесе шанас килет. Çапла шутлаççĕ Апчарти Вуслăх урамĕнче пурăнакансем те. Мĕншĕн тесен вĕсем патне ку ырлăх çитмен-ха.

Малти Тутаркасра пурăнакансем те çул тунă хыççăн хăшĕсем кăмăллах юлмарĕç. Мĕншĕн тесен урам тăрăх сарнă çул пĕчĕк лапам тĕлне çитсен чарăнать. Тепĕр енче вырнаçнă 12 хуçалăх валли çулне тăвайман пулсан та, лапам урлă та пулин йĕркеллĕ каçă туса хăвармаллаччĕ.

Çĕрлехи вăхăтра урамсене çутатса тăни аван ĕнтĕ. Анчах та кунта та йĕрке кирлех. Кашни ялăн валлиех лимит туса хатĕрлес пулать. Унсăрăн халĕ уйăх çап-çутă каçсенче те е тул çутăлсан та лампочкăсем çуннине курма пулать. Е тата пĕр ялта хăш-пĕр урамсене çутăсăр хăвараççĕ. Ку вăл 5-мĕш пралук çуккипе çыхăннă иккен. Кулăшла сăлтав мар-и вара çакă?

Кашни ялта тенĕ пекех старостăсем пур. Анчах хăш-пĕр çĕрте вĕсем ячĕшĕн кăна. Хальхи вăхăтра камăн-ха пĕр пус укçасăр ĕçлес килтĕр. Вĕсен вара халăхпа ĕçлемелли питĕ нумай. Çакă тĕрĕç тесе шутламастăп. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен шалăвĕсем палăрмаллах ӳсрĕç, апла пулсан старостăсене те ĕçшĕн тӳлеме май тупасчĕ. Ял вăл пĕр пысăк çемье пек пулмалла, çемье пуçĕ те кирлех.

Ял-йыш туслă, килĕштерсе пурăнсан, пур çитменлĕхсене те пĕрле кар тăрса татса парсан, ялсен сăн-сăпачĕ те лайăх еннелле улшăнса пырĕ, пурăнакансен те ĕçлес килĕ, пурăнас кăмăлĕ те çӳллĕ шайра пулĕ.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

Ыйту – хурав

# Сахалрах çунтаратăн – сахалрах тӳлетĕн

**Хаçат редакцине вулаканран çыру килнĕччĕ. Çапла çырать вăл: «Электроэнергипе усă курнăшăн укçа пуçтарассине ЖКХ управляющи компани (Любимов Н.В.) çине куçарчĕç. Çĕнĕлĕх вăя кĕрет теççĕ. Малашне хваттерсенче пурăнакансен подъездри лампочкăсем çуннăшăн хăйсен кĕсйинчен тӳлемелле пулать имĕш. Çак тӳлеве мĕнле майпа шутласа палăртаççĕ? Кунти çутта перекетлени тӳлев çине витĕм кӳрет-и?»**

**Муркаш районĕнчи «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран вулакан ыйтăвĕ çине çапла хурав килчĕ:**

«Граждансене коммуналлă услугăсемпе тивĕçтермелли çинчен калакан 307-мĕш номерлĕ положение РФ Правительстви 2006 çулхи майăн 23-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн потребительсене электроэнергипе тивĕçтерсе тăрассине «Ĕç тăвакан» («Исполнитель»), тепĕр майлă каласан, Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçлама тивĕç коммуналлă услугăсем шутне кĕртнĕ. Çавна май хальхи вăхăтра электроэнергипе тивĕçтерессин услугине «Чувашская энергосбытовая компания» уçă акционер обществинчен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанине парас ĕç пырать.

Правилăсен 22-мĕш пунктĕнче килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакан хваттер хуçисем коммуналлă услугăсемшĕн çуртăн пĕтĕмĕшле учет приборĕсен кăтартăвĕсене кура тӳлесе тăма тивĕç. Çавна шута илсе электроэнерги пĕтернине шута илмелли приборсене Муркашри нумай хваттерлĕ çуртсенче пуринче те вырнаçтарнă. Кашни уйăх вĕçĕнчех ертсе пыракан компани çуртăн пĕтĕмĕшле учет приборĕн тата кашни хваттерĕн учет приборĕн кăтартăвĕсене çырса илет. Кайран вара пĕтĕмĕшле çак çуртра тăкакланă электроэнерги виçи хваттерсем çине пропорципе пайланать.

Правилăсен 23-мĕш пунктĕнче килĕшӳллĕн хваттерте электроэнергипе усă курнăшăн тӳлемелли виçене çак формулăна кура палăртаççĕ:

$$\text{Эл. энергийĕпе усă курни (тариф)} = \frac{V\ (\text{çуртăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ})}{V\ (\text{пĕтĕмĕшле кăтарту})} \times V\ (\text{харпăр хăйĕн кăтартăвĕ}) \times Т$$

V (çуртăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ) – нумай хваттерлĕ çуртра расчетлă тапхăрта пĕтĕмпе электроэнерги пĕтернĕ (çуртăн пĕтĕмĕшле учет приборĕн кăтартăвĕ);

V (пĕтĕмĕшле кăтарту) – харпăр хăйĕн учет приборĕсен пĕтĕмĕшле кăтартăвне кура нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансем расчетлă тапхăрта электроэнерги пĕтернĕ;

V (харпăр хăйĕн кăтартăвĕ) – расчетлă тапхăрта кашни уйрăм хваттерте электроэнерги пĕтернĕ (харпăр хăйĕн учет приборĕн кăтартăвĕ);

Т (тариф) – РФ законодательствипе килĕшӳллĕн çирĕплетнĕ электроэнерги тарифĕ.

Çӳлте илсе кăтартни çапла пĕтĕмлетӳ тума май парать: хваттерсенче тата пурте усă куракан вырăнсенче электроэнергие мĕн чухлĕ сахалрах пĕтерееççĕ, çак коммуналлă ресурсăшĕн тӳлесси те çавăн чухлĕ пĕчĕкрех пулать.

Муркаш районĕнчи «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество электроэнерги тăкакланине шута илмелли приборсемпе усă курмалли срок тухнисене е приборсем юсавсăр пулсан ертсе пыракан компание пĕлтерме ыйтать. Çапла тумасан электроэнергипе усă курнăшăн нормативсене кура тӳлеме тивĕ. Кунпа пĕрлех çавна асăнса хăварни те вырăнлă. Граждансем коммуналлă услугăсемшĕн вăхăтра тӳлесе тăни вĕсене кирлĕ мар пулăмсенчен (пенисем тӳлесси, суд органĕсем) хăтăлма май парĕ».

Çырăнтару – 2009

## Вулакан, пулар пĕрле!

Е килте, е хăнара,
Савнăçра е хуйхăра,
Вулакан, пулар пĕрле
«Çĕнтерӳ ялавĕпе».

Санăн çывăх юлташу
Нихăçан улталас çук.
Алла-аллăн çавтăнсан
Тумхах çул та ним те мар.

Калаçать санпа пĕрмай,
Сĕнӳсем парать нумай,
Эс пĕлетĕн çĕннине
Унăн страницисенчен.

Чăтаймасть вăл йăх-яха,
Тĕрлĕ тĕрĕсмарлăха.
Ыррине вара мухтать,
Çул памашкăн тăрăшать.

Тĕрлĕ сăвă, хайлавсем,
Статьясем, тĕрленчĕксем
Кун кураççĕ вĕçĕмех,
Вулама çеç ан ӳркен.

Унăн çывăх тусĕсем –
Мĕн пур район çыннисем:
Аслисем, кĕçĕннисем,
Шкулсенче вĕренекенсем...

Айтăр-ха апла пулсан
Туслăха çухатар мар,
Çак юратнă хаçата
Çитес çул та çырăнар.

**ВЛАД.**

## Пĕлни пăсмасть

* Холодильникри юрлă «кĕрĕк» сийне часрах ирĕлтерес тесен, шăнтмалли камерăна вĕри шыв тултарнă грелка хурăр. «Кĕрĕк» хăвăрт ирĕлет, пăслантармалли хатĕр те сиенленмест.

* Тимĕр хупăпа пăрса хупнă банкăна уçма çăмăл мар. Банкăна вĕри шыв янă чашăка темиçе çеккунтлăха ӳпĕнтерсе лартсан, ăна вăй хумасăрах уçма пулать.

## Общий список кандидатов в присяжные заседатели по Моргаушскому району Чувашской Республики

| № п/п | Фамилия | Имя | Отчество |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| 1. | Аксендарова | Раиса | Павловна |
| 2. | Андреева | Светлана | Анатольевна |
| 3. | Андреева | Эльза | Николаевна |
| 4. | Андрианов | Алим | Георгиевич |
| 5. | Андушкин | Николай | Васильевич |
| 6. | Антонов | Андрей | Виссарионович |
| 7. | Атласкина | Раиса | Анатольевна |
| 8. | Борзаева | Наталия | Вячеславовна |
| 9. | Васильева | Фаина | Ивановна |
| 10. | Волков | Евгений | Алексеевич |
| 11. | Вострейкина | Тамара | Тимофеевна |
| 12. | Вязова | Вера | Геннадьевна |
| 13. | Гаврилова | Маргарита | Васильевна |
| 14. | Галкина | Надежда | Валериановна |
| 15. | Герасимов | Юрий | Алексеевич |
| 16. | Германова | Юлия | Алексеевна |
| 17. | Голубев | Валерий | Павлович |
| 18. | Голубева | Галина | Георгиевна |
| 19. | Гордеева | Валентина | Матвеевна |
| 20. | Дашков | Валерий | Валерианович |
| 21. | Егорова | Валентина | Викторовна |
| 22. | Ежуков | Александр | Георгиевич |
| 23. | Ермакова | Алевтина | Евгеньевна |
| 24. | Живойкин | Сергей | Михайлович |
| 25. | Жуков | Юрий | Нестерович |
| 26. | Зайцев | Илья | Михайлович |
| 27. | Иванов | Валериан | Сергеевич |
| 28. | Иванов | Владимир | Зиновьевич |
| 29. | Иванова | Людмила | Гавриловна |
| 30. | Иванова | Людмила | Николаевна |
| 31. | Илларионова | Светлана | Егоровна |
| 32. | Ильина | Елена | Германовна |
| 33. | Кадыкова | Елена | Ивановна |
| 34. | Карпова | Светлана | Ильинична |
| 35. | Ковалев | Михаил | Николаевич |
| 36. | Колбасов | Владимир | Дмитриевич |
| 37. | Колесникова | Галина | Михайловна |
| 38. | Кондратьева | Антонина | Сергеевна |
| 39. | Кошкина | Валентина | Ивановна |
| 40. | Кузнецов | Алексей | Алексеевич |
| 41. | Кузьмин | Анатолий | Афанасьевич |
| 42. | Леденцова | Надежда | Анатольевна |
| 43. | Любимова | Валентина | Николаевна |
| 44. | Любимова | Оксана | Порфирьевна |
| 45. | Максимова | Лариса | Петровна |
| 46. | Мамутин | Анатолий | Петрович |
| 47. | Матвеев | Валентин | Николаевич |
| 48. | Матвеева | Венера | Филимоновна |
| 49. | Микашкин | Валериан | Ананьевич |
| 50. | Миловидова | Елена | Васильевна |
| 51. | Михайлов | Геннадий | Ганнадьевич |
| 52. | Моисеева | Галина | Петровна |
| 53. | Молькова | Любовь | Геннадьевна |
| 54. | Мочалов | Игорь | Олегович |
| 55. | Музыков | Михаил | Николаевич |
| 56. | Никитина | Валентина | Владимировна |
| 57. | Никитина | Валентина | Михеевна |
| 58. | Никитина | Мария | Георгиевна |
| 59. | Николаева | Елена | Алексеевна |
| 60. | Николаева | Лилия | Валерьевна |
| 61. | Никонорова | Галина | Петровна |
| 62. | Павлова | Светлана | Юлиановна |
| 63. | Пагеева | Лидия | Григорьевна |
| 64. | Парандеев | Александр | Федорович |
| 65. | Паргеева | Фея | Фадеевна |
| 66. | Перцев | Юрий | Викентьевич |
| 67. | Петров | Геннадий | Александрович |
| 68. | Петрова | Юлия | Михайловна |
| 69. | Пискарева | Эмилия | Геннадьевна |
| 70. | Поркин | Геннадий | Александрович |
| 71. | Прокопьева | Оксана | Валерьевна |
| 72. | Просова | Марина | Юрьевна |
| 73. | Пушкарев | Андриан | Петрович |
| 74. | Романов | Виталий | Анатольевич |
| 75. | Романова | Роза | Николаевна |
| 76. | Рылина | Ольга | Ивановна |
| 77. | Салдакеев | Василий | Васильевич |
| 78. | Семенова | Нелла | Петровна |
| 79. | Серафимов | Анатолий | Алексеевич |
| 80. | Соколова | Светлана | Георгиевна |
| 81. | Степанова | Татьяна | Зиновьевна |
| 82. | Столяров | Виталий | Митрофанович |
| 83. | Столярова | Оксана | Николаевна |
| 84. | Сурикова | Олимпиада | Михайловна |
| 85. | Сытина | Елена | Леонидовна |
| 86. | Толстова | Людмила | Виссарионовна |
| 87. | Тимофеева | Зоя | Никтополионовна |
| 88. | Угарова | Анжелика | Васильевна |
| 89. | Федотов | Михаил | Валерьевич |
| 90. | Филиппова | Марина | Валерьевна |
| 91. | Харитонова | Элла | Аркадьевна |
| 92. | Хлашева | Алевтина | Петровна |
| 93. | Храмова | Аэлита | Юрьевна |
| 94. | Храмова | Людмила | Валерьевна |
| 95. | Шишокина | Нина | Ивановна |
| 96. | Юрусов | Михаил | Николаевич |
| 97. | Ядыков | Николай | Витальевич |
| 98. | Яковлева | Надежда | Николаевна |
| 99. | Ярусова | Альбина | Петровна |
| 100. | Ятманова | Альбина | Васильевна |